Пĕтĕм тĕнҫери пролетарисем, пĕрлешĕр!




СЫЛТĂМРИ. Ей, тăвансем, ан кайăрха. Тепĕр ҫулпа кайĕпĕр. Куратăр пулĕ мана: ку ҫулпа утма йăвăр!

# ÇĔРЕ КУЛМЕ  ТĂВАР НИМЕ.

**(Стсенă çинђе калама çырнă райешнĕк).**

Ман сире ђи малтан саламламалла кунтан. Пуç тайатăп. Ларăр тăп.

Епĕ сирĕн ума мыскара тума тухса тăмарăм халĕ. Мимепе каллĕ маллĕ шухăшлама кирлĕ, тетĕп сире халĕ.

Çын çӳллĕш тыра вырса илме ырă... тăнпуç кирлĕ пулат̆. Ăна акроном та калат̆. Кĕпе çаннипе тупа тăватăп — çĕре ик хут ытларах ĕçлеттерме пултаратăп.

Çĕре навус кирлĕ, — ăна ваттисем те пĕлнĕ. Навус сахал — мĕн тăвăнха, сухал? Пуçна ан ват — кирлĕ супперфосфат. Вăл анђах мар, кирлĕ тата акшар*). Тани йатлă çĕршывра тулă та, ыраш та хӳме пек ӳсет, — мĕншĕнха? Акшар сапнăран. Унти çĕрсем 60 прођăнран... кайа мар акшарпа мăнтăрланнă. Кукамайла ватăлнă кукăр сухапуççене çăкăр кăмакине... пăрахса кăмрăк тăвăр. Лайăх плук, йе трактăр... йуратат̆ пирĕн çĕр. Тата есĕр пĕлтĕр, кунтăран уçласа, акрăр вăрлăха. Кунтăна пăрахсан, çейăлккăпа аксан, пĕр пĕрђи кунта, тепĕр пĕрђи километтăрта шăтакан пулмĕ. Пурте йĕркеллĕ (тепĕр майлă каласан — „меллĕ“) ӳссе ђунна хаваслантарĕç. Тата пирĕн тепĕр ĕç — вăрлăха тасатса акасси. Пулар мар епĕр „Тăманакасси“; тасатса акăпăр та, çум курĕк кайĕ хăйамата. Вăрлăха хатĕрлеймерĕн, формалинпа ђукеймерĕн — йӳçĕ вутпуççи йашкалăхпа пĕрле çи! Çавă кирлĕ сана, тĕлне пĕлмен тăманана.

Паранка уйа аксан, уйне кĕл сапсан, санăн пуçăнта, миме вырăнне, улăм марине епĕ те пĕлме пултарăп. Авал йумахри Улăп вăйĕпех хăт̆ ес еçле пĕђен, нуша мăйу çинђен анса лармĕ — ĕнен! Ик аллупа колхосран... йарса тытсан, нуша сăмаха... хăварăн манăçа. Уйĕпе пĕр ана пултăр, ани çинђе карлаттарĕ трактăр. Çĕр ĕçне тума кӳлĕнĕ наукка, трийер, çейăлккă, сорттировккă, шнейккă, молоттилккă, коççилккă. Пулĕ пĕрлешӳллĕ... колхос вăй-халĕ.

Тата калам: кулак хр-ам-ам!—вĕрет йытăлла... çĕнелекен йала. Мĕншĕн? Çакăншĕн: тусас ăн талкăшпех колхос—кулак çийĕн кайĕ паравос.

Краштăнсем, неушлĕ епĕр маххă парăпăр, тырпуллă пулмăпăр, пĕтĕм Сойус умĕнђе курăпăр намăс? Пурха пуçра ăс: пуç тӳпинђен шаккар нушана, вăтам-ђухăн куçар пурте колхоса! Çуракине иртерме, науккăна кӳлме тăвăпăр ăмăрту! „Тут—ту—ту!“—Пĕрремĕш свисток паратăп. („*Пурте колхоса!*“—*тенĕ плаккат çине кăтартса*). Ту—ту--тут!.. Тут!.

Йăван Муђи

## Вăрман калаçат̆.

**Вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе Йĕпреç леспромхосĕ оппортунисла ĕçлесе пырат̆. Контрођ сатанине пайан кунђен те 3 прођăн çеç пурнăçа кĕртнĕ. Кулаксем вăрманта ĕçлемеççĕ. Çавăнпа вутă хатĕрлес план 5,7 кăна пурнăçа кĕнĕ.**

Пĕрре акăш, рак çăрттан,
ăлав туртма тытăннă...

тесе çырнă вырăссен йуптаруçи Крылов. Аккăш, рак, çăрттан хушшинђе канаш пĕр пек пулманнипе ăлавĕ вырăнĕнђен те хускалман тенĕ малалла.

Пирĕн халђ вăрман хатĕрлес ĕçри полошенийе кăтартмалла. Калăпăр, пĕр-пĕр уполномођђи кулакпа пĕр канашлă пулсан та, ăлав хускалманни çинђен Крылов çапла çырнă пулĕђђĕ, оппортунисла полномођђи шухăшне кăтартса:

Çав-çав çĕрте, çав çĕрте,
Полномођђи пурăннă.
Вулакан ан хĕпĕрте,
Вăл кулакпа çыхăннă.
Еçсем каймаç малалла,
Канаш пĕр-пек пулсан та,
Кулака йурамалла...
Ђухăн... ђухăн тенĕскер,
Асап куртăр вăрманта.

Анђах епĕр сăвăç мар пирки, кун пек историйе просăпа çырса кăтартас терĕмĕр.

Историйĕ çапла:

Шартлама сивĕ хĕл. Ура айĕнђи йур пĕрђисем çатăртатса йăлтăраççĕ, Ђĕркуç тарăн йурпа хывăннă Йĕпреç вăрманĕ. Такама кĕтсе ывăннă йывăççем пĕр-пĕринпе пăшăлтатса калаçаççĕ.

— Хăçан касма килĕçши пире?—хуйхăллă сăмах хускатрĕ вĕсенђен пĕри.

— Еп хам тем пек хĕрӳ паракан вутă, пур çĕрте те тӳсĕмлĕскер, мана мĕншĕн касмаççĕши?—тесе тĕлĕрсе ларатăп,—сăмах хушрĕ латакай йуман.

— Сана хăçан кассан та ĕлкĕрет, пирĕн—пирĕн... çурхи шыв хускалсанах йухса каймалла.

— Тĕрĕс!—терĕ ђăршă вăраммăн сывласа.—Ăçта кирлĕ çĕре пире сĕтĕреççĕ малтан.

— Ан суйăр, епĕр сиртен те тĕреклĕрех,—вĕренепе йуман сас пађĕç харăссăн.

Йахтă ку шухăшпа килĕшсе çĕнĕ сăмах хускатрĕ

*) Акшар-иçвĕç.

— Йулташсем, епĕр пурте кирлĕ, пире пурсăмăра та совет промышлĕннăçне тĕреклетме, тата совет уђрештенисене хутса ăшăтма йараççĕ. Астăвăтăр пуљ, пĕлтĕр пиртен аслисене, вăхăтлă хатĕрлесе, çурхи шывпа ăсатрĕç. Кăçал... мĕн пултăмăр кăçал... йур тарăнланнăçем тарăнланса, кунпа çĕр никама пăхмасăр малалла шăваççĕ, епĕр çапах та ура çинђех ларатпăр. Йĕпреç леспрăмхосĕ пире хатĕрлес плана ку тарана çитсе те 5,7 прођђăн çурă çеç пурнăçа кĕртнĕ. Мĕнтен килетши ку?...

Çак хуйхăлă сасса илтсе, Ĕç комиссарĕн полномођђи ђўређи çинђен халђ çеç вĕçсе килнĕ ђакак йахтă çине пырса ларђĕ те, çунаттисене тăпăлтаткалатса, сăмах хускатрĕ:

— Еп веçех пĕлетĕп мĕнтен килнине, терĕ вăл, лешсем тем пек савăнса, силленкелерĕç те, çыпçăннă йурĕсене лĕпсĕрт пăрахса, савăнса итлеççĕ.

— Йал урлă вĕçсе иртеттĕм. Выçă хам. Ăçта та пулсан çиме çукши тесе, пăхкаласа пыратăп. Сасартăк пĕр çурта çынсем капланса кĕнине курах карăм. Кунта выђăх пусаççĕ тетĕп, тăранмаллăх тупатăпах тесе хаваслантăм. Хайхи епĕ те вăл çурт çине анса лартăм. Пўртĕнђе „ыран кил“ тейекен йышши çын ларать. Унђђен те пулмасть пўрт алăкĕ йар уçăлђĕ те, пўрте тепĕр çын кĕрсе тăђĕ. Ку ун пекки мар, калаçнинђенех паллă. Кĕнĕ-кĕменех ĕç çинђен сăмах хускатрĕ.

Вăрман касма пуртă ыйтать.

— Алăпа касма çук вĕт, хăть пуртăпа пăђкă тупса парăр, тет.

Лешĕ иумайђђен ђĕнмесĕр тăнă хыççăн, вăкăр пек куçĕсене тавăрса хыçалалла çаврăнђĕ те:

— Еп тимĕрçĕ мар пуртă хатĕрлеме, пуртăшăн тимĕрçе кайаççĕ, тесе тавăрђĕ. Çак çын вара ним тума аптраса кĕтсе тăракан ерттеле хутшăнђĕ те, пĕрле сўтсе-йава пуçларĕç.

— Çакăн пеккисене оппортунис тесе калаççĕ ĕнтĕ. Сурăх та ђылай пултăр, кашкăрĕ те тутах тăтăр, пуйансем те килтех ларђђăр (вăрман касасран пăрăнса) касас тейекенсене те пуртă-пăђкă памасăр ђăрмантарас. Çапла калаçса йал хушшине çухалђĕç. Çакăнтан вара сире хатĕрлс ĕç мĕншĕн ђарăнса тăнине пĕлтĕм. Ну еп васкатăп, терĕ те, ђакак вĕçсе кайрĕ.

Унђђен те пулмасть, вăрман ăшĕпе тем ђухлĕ çын иртсе пыраççĕ. Майĕсем аçам çухи ăшне пытаннă, пиçиххийĕсем çумне пуртăсем ђикнĕ, пĕри пуçне каçăртса аллине йăвăç тăрринелле çĕклерĕ те: — çаксене вăхăтра хатĕрлес ĕçе ђăрмантарнăшăн, Ĕç комиссарĕн оппортунисла полномођђийĕсене сирпĕтнĕ...

— Тепри ун йенне çаврăнса: çапла кирлĕ те унпеккисене, йывăç выранне оппортуниссене хăйсене, кулакпа пĕрле, çурхи шывпа ăсатмалла, терĕ.

Кăсем пурте ирĕккĕн пĕрлешсе килнĕ утарнĕксем пулнă. Нумай та вăхăт иртмерĕ, çивђĕ пурттисемпе вăрмана йантрата пуçларĕç.

**Картсĕв—Атрак**

---

## Тăхтас тет пуљ.

Ђăрăшра (Çĕрпў р.) ваттисене вĕрентме хăй те хут сахал пĕлекен (икĕ çул вĕреннĕ) çынна хушнă. Ку çынни ку таранђен те ĕçе тытăнман.

— Сирĕн ваттисене кăçал та вĕрентмеçи?

— Вĕрентес теçĕ те-ха. Пирĕн вĕрентекенĕ халĕ хăй те вулама пĕлмест те-ха, хăй вĕренеђђен тăхтас тет пуљ,

**Ленкеш.**

## Фискуљттурнĕк.

Марисен патшалăх театăрĕпе Ђăваш тĕп театăрĕ кăçал çулла пĕрпĕринпе соцсиалисăм ăмăрту токăвăрĕ тунă. Анђах ку таранђен пĕр пункти те пурнăçа кĕмен.

(Арттис çырăвĕнђен)



**— Мĕн ку пĕр вырăнтах ташласа тăрать?**

**— „Бег на месте“ теççĕ ăна вырăсла. Сотсиалисăмла токăвăра пурнăçа кĕртсе малалла йарас тесе ђупать вăл. Çиђĕ уйăх ĕнтĕ çавăн пек „бег на месте“ туса тăрать, мĕскĕн!**

---

## Пуçа килнĕ шухăшсем.

*Хăш ђухне мĕн ђухлĕ ĕçĕ сахалпулнă, çавăн ђухлĕ отђотĕ пысăкрах пулать.*

---

*Çиђђĕн пĕр çынна кĕтмеççĕ, теççĕ. Кĕтеççĕ çав колхосран пĕр çынна анђах кăларса йаратăн, кăларса йанă хыçăнах çĕнĕрен çиђђĕн-саккăрăн колхоса кĕме сайавленисем параççĕ.*

---

*Хăшпĕр хапрăк-савăтсем утарлă квартăла кивĕ çтилпе пĕтерме шутлаççĕ.*

---

*Укçан вçаткă панă ђухне вăрттăн пама кирлĕ, пĕре çавăрмаллăх тапакăн панă ђухне, вăрттăн памасан та йурать.*

# Ҫил майлӑ кайакан пакша хӳри.

Аҫамӗсене (ђаппанӗсене) хывса пӑрахсах вӑрман касакан Тукас ертелӗ ҫыннисем хӑлхаран, питрен ҫыртакан ҫил каҫ пулас умӗн татах хайарланнине сисмеҫҫӗ. Пуртӑ сассисем йӑвӑҫсем хушшипе инҫех каймаҫҫӗ, тӳпенеле туртӑнса мӑн йӑвӑҫ тураттисем хушшине ҫакланса, пӗтсе лараҫҫӗ. Пӑђӑкасем хурҫӑ хӗлӗхӗсемпе пӗрпӗринпе ӑмӑртмалла йанраҫҫӗ. „Айта, ойта, ойишшо!" тесе пилӗкӗн пӗр харӑс кӑшкӑрнӑ сасса ђӑтаймасӑр, мӑн хыр експӑрта (йут патшалӑха) йама хатӗрлесе хунӑ йӑвӑҫ купи патнелле сике-сикех шӑват̆.

— Ой-ой, хытӑ ӗҫлетпӗр епӗр. Пурте пирӗн пек ӗҫлесен... леш, план тенине, ҫӗнҫулђенех тултарса памалла та,—терӗ ђакӑр куҫлӑ, пилӗкне курӑспа туртса ҫыхнӑ, мулахайлӑ йӑвӑҫ касакан.

— Мӗнле каламаллаха епӗр ӗҫленине. Вон Турикас ҫыннисем калаҫҫӗ: епӗр вӑрман каснӑ ҫӗрте утарнӗкла ӗҫлетпӗр теҫҫӗ. Пирӗн ӗҫлени те утарнӗкла пулса пырат̆, те лашалла (утла)?

— Утла тетӗн?

— Темӗскер пулат̆ вӑл утарнӗк тени?

— Ыйтса пӗлесђӗ.

— Камран? Кашкӑртани?

— Енер хуларан килнӗ пӗр ухатнике куртӑм. Пырса калаҫмӑнши пирӗнпе терӗм те: кӑнтӑрлахи апат пӗҫерме мулкађӑ тытса каймалла,—пыримастӑп пулӗ, терӗ.

— Токлат тутарсан аван пулађђӗ те!

— Токлатђӗк тенисем вӑрманалла пӑхмаҫҫӗ пуљ ҫав вӗсем!

Сӑмах ҫӗре ҫитмесӗрех пӗтсе ларђӗ. Хӑшӗн шухӑшӗсем киле кайрӗҫ, хӑшӗн—хытӑ йурпа витӗнсе ларнӑ ҫемљанккӑна, хӑшӗн—килте выљӑхсене каҫхи апат панӑ ҫӗре.

Пуртӑсем шаккаҫҫӗ. Пӑђӑксем йанраҫҫӗ. Пурттисем те, пӑђӑкисем те утарнӗклех ӗҫлеҫҫӗ те, анђах, ҫыннисем пекех, утарнӗк мӗнне пӗлмеҫҫӗ.

— Сурхури ыран тенӗ ђухне йалта ҫпектакӑљ лартаҫҫӗ пуљха, терӗ пӗри сарӑрахскер ыттисем ҫине пӑхса.

Никам та сӑмах тупса хирӗҫ ђӗнекен пулмарӗ.

— Кинођђӗ ҫакӑнта!—терӗ ҫав ҫынах ђарӑнма пӗлменскер.

— Љавантти пур ҫинђе ҫпектаккӑљпе киносӑрах вӑхӑта лайӑх иртеретпӗрҫке. Вӑл сывӑ пултӑр анђах. Майрасемпе ҫӳрени ҫинђен суйма тытӑнсан кулса вилӗн.

— Љавантти!—терӗҫ пӗрмеђесӗр кӗрӗк тӑхӑннӑ ҫынна.

— Мӗн?—терӗ лешӗ вут патӗнђе ђӗлӗм ђӗртсе тӑраканскер.

— Салтак Петӗрӗ вӑрмантан тавӑрӑнсан арӑмне мӗн каланӑ тетӗнха?

Лохл-лохл! кулса йађӗҫ пурте пекех.

Лешӗ (Љавантти) хӗрарӑмсем умӗнђе калама вӑтанмалла историйе шӗкӗлђеме тытӑнђӗ.

Пӗре илтнӗ халапах кула-кулах йышӑнаҫҫӗ вӑрман касакансем. Ҫӑтӑр! туса илеҫҫӗ ҫӗр ҫулхи хырсем Љавантти ҫӑварӗнђен тухакан сӑмахсенђен йӗрӗнсе.

Халап пӗтрӗ.

— Мӗн ђухлӗ выљаса илтӗн?—тесе ыйтрӗ калаҫҫа тӑракансенђен пӗри хӑйӗн йулташӗнђен.

— Мӗн... выљаса илн-и вӑл... пилӗк тенкӗпе...

— Кам нумай илђӗ?

— Ҫитӑрка Хветӗрӗ 20 тенкӗ ҫаклатрӗ. Карђӗ хӑйӗн те... пур картне те паллат̆.

Шур хӳрине выљатса ђӑтлӑхран пакша (вакша) тухса ҫул майлӑ пит хӑвӑрт ђупса карӗ.

Калаҫса тӑракансенђен ҫамрӑкраххи йероплан пек вӗҫрӗ пакша хыҫҫӑн. Ђӗркуҫи таран йура хашка-хашка ишет. Пош! такӑнса ӳкрӗ кайсан-кайсан.

Пӑхат̆—пакши тарса хӑталнӑ.

— Алпах тытас терӗни пакшана?—тесе кулса илђӗҫ унтан тавӑрнсан.

— Пакшана? Мӗнле пакшана?

— А мӗн хыҫӑн ђупрӑн ес? Пакша хыҫҫӑн пуљ.

— Тфу! терӗ ађи.—Епӗ хаҫат ҫилпе вӗҫсе кайат̆ тесе. Кивви пулсан та вуласа пӑхма май килмӗши, тенӗђђӗ. Шурӑ та хӑй... Пакша еппин?

Ыттисем кулаҫҫӗ.

— Йӑван пакшана тытса вуласа пӑхас тенӗ.

— Ха-ха-ха!..

Ан кулӑр, йулташсем! Ҫемљанккӑра ерни-ернипе, уйахӗ-уйахӗпе пурӑнса, кив хутсене мар, тапак хуђӗсене те хавасланса вулӑн. Тивӗҫлӗ оркӑнсемпе орканисатсисем вӑрман касакансем хушшинђе куљђут тӗлӗшпе ӗҫлеме кирли ҫинђен аса илмеҫҫӗ. Тӗттӗм унта ҫемљанккӑра куљҫут ӗҫне тума, теҫҫӗ пулмалла.

Тӗттӗм ҫав, тӗттӗм! Ҫутӑ кирлӗ! Йур ҫутӑ та, ун ҫутипе ҫитмест.

**Йӑван Муђи.**

---

### Шкулта.

— Сире пайан мӗншӗн вӗрентмеҫҫӗ. Канмалли кун мар пуљ вӗт?

— Пирӗн канмалли кун мар та, уђиттӗлӗн канмалли кун пулнӑ.

**Сађкай.**

### Шӑршӑ кӗресрен.

— Сирӗн йалсовет претҫеттатӗлӗ мӗншӗн кӑнђелерте те тути урлӑ шарӑх ҫыхса ларат̆?

— Ерех шӑрши кӗресрен.

**Шӑпкан.**

### Суйлавра.

**Пуху пуҫлӑхӗ:**—Ну, Ҫитӑр Ваҫҫилђӑ ҫинђен кам мӗн калас тет!

**Поткулађнӗк**—Вӑл аван ҫын, ӑна суйлас пулат̆, тӑрӑшса ђухӑнсем майлӑ ӗҫлет. Сыхлӑх ернинђе пӗр ҫын та ӗҫлемен, пӗр Ҫытӑр ҫеҫ ӗҫлерӗ.

**Ђухӑн:**—Пӗр Ҫытӑр ҫеҫ ӗҫлерӗ ҫав сыхлӑх вунӑкунӗнђе. Тыру хатӗрлес кампанирен сыхланса 75 пӑт тырӑ пытарђӗ.

**Йанкар.**

## Ретаксирен ыйтусем.

* Шĕнерпусĕнђи колхос çамрăкĕсен шкулĕн акрономĕ, калаха: кĕркунне вĕренекен ађасене ђавтарнă çилос шăтăкне тулнă йуртан хăçан çилос пулаť?
* Патăрйел районĕнђи Çĕнйал тĕлĕнђи леçник Митрофан Алексантăрђ, каласа памăнши есĕ пире: нумайах пулмасť есĕ ӳсĕрпе хăвăн çумри пăшална, тата сумккуна çухатнăђђĕ. Тупăнђĕçи вĕсем? Колхоса хирĕç суйа халапсем ăçтан тупатăн есĕ—çĕртени, йе мађђа тăринђени?
* Тĕнсĕр (Çĕрпӳ районĕ) уђђитли, калаха пире: ратио валђи пухнă укçасем кăсйунта йăванса çӳресе йакалса каймарĕçи? Тытса пăхха кăсйупа—шăтса каймани вăл?
* Шăнкасри (Шупашкар районĕ) пушар трушини пуçлăхĕ, каламăнши есĕ пире: хурал сарăйĕнђи пиђкере шăнса ларнă шыв пушар пĕтсен миçе сехетрен ăшăнма пултараť?
* Сĕнтĕрпусĕнђи (Сĕнтĕрвăрри районĕ) йал уполномођђăнĕ Миронăв йулташ, мĕншĕн есĕ кампанисем иртернĕ вăхăтра пухусене вăрттăн, колхоçнĕксем сисиђђен, туса иртеретĕн? Пухусене, колхоçнĕксем сисиђђен, тĕпсакайĕнђе туса иртерме шухăшламастăни?
* Ђурпай йалĕнђи (Йетĕрне районĕ) ликвитаттăр Сахар Кирилђă, пĕрик ерне вĕрентмесĕр çӳренĕ ђухне мĕнле ĕçсем тăватăн есĕ? Мулкађсем хыççăн ђупатăни, йе аçун кивĕ кĕрĕк аркине йавалатăни?

---

### Утарлă ĕçлеме пултаракан пуçсем.

Вăрнар райçĕрпайĕнђе ĕçлекенсем утарлă йапалана хăйсем майлă ăнланнă.

Вĕсен ĕçĕ:

В. Срочно

| | |
|---|---|
| Р.С.Ф.С.Р.<br>16 дек. 1930г.<br>№ 11750 | Всем Сикам и правлениям колхозов Вур. р. Вурнарский Райземодел предлагает Вам поспешить исполнением предписания РИКа от 2 го ноября с. г. за № 11730 по вопросу проведения простейших мероприятия о очиске лугов и пастбищ от мелкого пороса кустарников, кочек и пр. За неисполнением сего будете привлечены к ответственности. |

П. п. за Зав. Райзо Вознесенский.

— Малађ кумма, тем „ыр йапала“ йурайĕнђен ђавса кăлартăн ĕнтĕ?

— Ан та калах. Çурхи курăк тымаррисене кăларатăп мари. Çулла вĕсем йӳнĕ пулнă, хађ кăлармалла йăвăр пирки хакне те хаклă параççĕ пуђ тетĕп.

— Апла пулсан ман та арăма ђасрах кăларма йарас пулĕ. Йамасан...

— Йамасан (кăлармасан) Рикран „улăхри курăксене кăларса пĕтермелле, кăларса пĕтермесен, к ответственности“ тенĕ.

— Васкамалла, васкамасан хупса та лартĕç. Вара ађа пăђасем выçах ларĕç.

Çапла кайа йулса ĕçлекенсене утарлă йĕркепе (васкаса) шухăшламасăр ĕçлекенсем (коловоťапсем) темелле.

**Пăлекен.**

### Тӳрленмен ђир.

— Тухăр, темĕскер ку хуш хырăм ыратнпе аптрарăмçке.

— А-есĕ пулăштав кĕленђи лартса пăхмарăн-иха?

— Пулăштав мар, ђетвĕртпе те усси пулмарĕçке.

**Мăђкаш.**

## Ахађ пулнă.



**Камшăнха çак иртнĕ виçĕ уйăх хушшинђе пит хытă тăрăшса ĕçлерĕмĕрха. Ревиçи пулмасť тет мĕн!**

**Хĕрлĕђутай районĕнђе.**

Çапла пулђĕ ĕç:
Туктамĕш йалĕнђе
Çыру пĕлмене
Тунă çекреттар.
Çынсем кунсĕрен
Канселарине
Токкумĕнт илме
Ђыраççĕ пухăнса
Еçлеме кайма
Тĕрлĕ вырăна.
Анђах çыруçи
Пĕлмест еас палли.

# Çынтан йулиђђен муртан йулас.

Кўршĕ карђăкĕсем Ăслă Микита патне ђасах пухăнђĕç. Ара, нађар-нĕђер çынах ђĕнмест вĕт! Ăслă Микита - йал пуйанĕ. Тата вăл хĕрарăмсене кирлĕ вăхăтра ăс парса тăрат̆. Ав, иртнĕ хĕлле те хĕрарăмсем, комсомолсем улталанипе, каç-каç шкула вĕренме кайса ђунĕсене ђут̆ шуйттана сутађђĕç. Ун ђухне те Ăслă Микита вĕсене вăхăтра ăс парса хăтарђĕ.

Ăсли патне йулашкинђен Авка Йемелккен лапђăк сăмсаллă карђăкĕ, тата Кăркăс Иллин вилме маннă, шăлсăр карђăкĕ персе çитрĕç.

Ăслă Микита услам çу пек çемçе ђĕлхине татах та çемçетсе йађĕ.

— Килĕрах, савнă хăнасем, килĕрах!

Арăмĕ ăмăртмалла авăтат̆:

— Тĕпеле иртсе ларăр!

— Куншă ша йурĕ-шке,—катăк шăлĕсем витĕр шăхăрат̆ вилме маннă карђăкĕ кăмаки сакки çине тĕрĕнсе.

Кăђухнехи пурнăç ытла та йăвăрланса çитни çинђен калаçкаласан Ăсли тапратрĕ:

— Йĕпе çине сапа тенĕ пек кăђухне...

— Шапла, ашам, шапла,—шăхăрат̆ карђăк.

— Есир мана ан пўлĕр-ха,—вĕриленет Ăсли.

— Шапла, ашам...

„Савнă" хăнисемпе пăсăласшăн пулмарĕ Ăсли.

—...Йĕпе çине сапа тенĕ пек кăђухне тĕрлĕрен кампанисем, çăмăр хыççăн кăмпасем шăтнă хăйех сике-сике тухаççĕ.

— Шапла, ашам, шапла...

— Тыррине суртласси, хăрмалинпа çăвасси...

Микитан йулашки сăмахне Улђукка ђапах çавăрса илђĕ:

— Хрманин текенни тата питĕ хăрушă йапала. Турă кĕнеки çинђе ăна „шуйтан çăнăхĕ" тенĕ.

— Ну-у-у?—улларĕ карђăк ушкăнĕ.

— Вăт сире „ну-у". Ну мар çав!

Вилме манни малти кĕтесселле çавăрăнђĕ те, пăт! пот! сăхсăхса илђĕ.

— Шĕнше пĕшеш, ашам... Вашпаши!

Авка пралук пек çинçескер, пĕкĕ пекех авăнђĕ.

— Çав храманинпе-и ĕнтĕ тырра сăвасшăн?—карђĕ çăварне Йемелккен лапђăк сăмсаллă карђăкĕ.

— Тин пĕлетни-ха есĕ?—савăнса кăшкăрђĕ Микита.—Унпа çусан пĕр пĕрђĕ тырă та шăтмаст̆. Шăтсан та пĕр-пĕрђĕ тыррине те çиме йурамаст̆—ăшђик йăтăнса анат̆.

— Ну-у-у?—çăварĕсене карђĕç карђăксем.

— Вăт сире „ну-у-у"...

— Тийаса килсенех пухува кайса хăрманинне çилпе вĕçттертеретĕп—çухăрђĕ лапђăк сăмсалли.

— Халех йал пуçлăхин пуçне кайса иретĕп.

— Кирлĕ мар хрманин,—хăрăлтатрĕ карђăк пухăвĕ.

— Кирлĕ мар!..

Алтансем иккĕмĕш хут йурларĕç. Пĕлĕт çинђе шур уйăх темĕнрен вăтаннă пек, хăш ђух питне пĕлĕт таткисемпе хуплат̆. Унтан сирет, каллех хупланат̆...

Мукаçей кĕлеђĕ умĕнђе лавпа хормалин ларат̆. Урапи айĕнђе, кукăљ пек хутланса, пĕр етем çывраћ.

Ăсли вырăсла хапхине ђор! туртса уçрĕ те хуллен, пахђа çуммипе, мукаçей кĕлеђĕ патнелле утрĕ.

---

Çынтан йулиђђен муртан йул тенĕ ваттисем, хамăрта луђђă муртан йулас марри, Укка. Çын тунине тăвас мари?—ыйтрĕ арăмĕнђен Ăслă Микита.

Мал йенђен, пĕлĕтпе çĕр хутшăнакан çĕртен çўçпуçĕсене тăмалантарса, ç ў л е л л е хĕвел упаленет.

Микита хура шĕлепкепе кил-картинђе уткаласа çўрет. Укахви ĕнисемпе сурăхсене кĕтĕве хăваласа леçнĕ те, урамран кил-картинелле кĕђĕ.

— Мĕн тумалла-ха вара?

— Мĕн тăвасси,— Микита ђарăнса тăђĕ,— Епир те çав хăрмалинпа тырăсене ђўхер мари?

— Ђўхесен йурĕ, сийенех кўмест тетĕн вĕт,—килĕшрĕ Укахви.

— Вăт çакăн пек çынна епĕ йурататăп. Микита Укахвине ђуп туса илђĕ. —Хаљ еп çыврам-ха, атту каçхине сахал çывăрнă, есир ђўхĕр.

Укахви тарçине, Путапа, ђĕнсе кĕлете тухрĕ.

— Çак кăрманинпа тырăсене ђўхĕрха.

Путтаппа Укахви кĕлетре ђылайђен ĕçлерĕç.

Ђўхессе те уш как нат̆ă ђўхерĕç: туллине, вирне пăри кĕрпине, вир кĕрпине. Кунта ђўхенĕ ђух халăх тыррине ђўхени мар, çителĕклĕ апађĕ-çимĕçĕ. Ђўхемесĕр çăнăх çеç йулђĕ.

— Ăна пĕçернĕ ђухне те хушса çăрăп, — терĕ Укахви. — Хаљ çитĕ-ха.

Ăслă Микита çемйи ирхи апат çиме ларђĕ. Путап çеç çук. Ăна Укахви тутлă апат хăйсене сахал тивĕ тесе кўршелле ăсатрĕ. Апат мĕнрен пĕçернине Укахви упăшкине те каламарĕ. Вăл çейккă çăнăхĕнђен пашалусем, кукăљ-çăмахсем (анђах йĕпли мар) пĕçерђĕ. Микита хыпаланса çикелерĕ те сасартăк вăл кашăкне сĕтел çине çот! — тутарђĕ те, çумĕнђе ларакан арăмне тĕртсе айаккинелле ывăтса, урайне пот! татăлса анђĕ.

— Шов!—хăсса кăларђĕ сип-симĕс хăсăк Ăсли.

— Ăш-ђик татăлса анат̆! Ей, светтуй турă. Ах, аспати!...

Тўске пек ђăмăр хырăмлăскер Ăсли пўрт кĕтессинђен кĕтессине урапа пек кускаласа çўрет.

Укахви упăшки çине урнă пек хăрушăн пăхса илђĕ те, урайне пуç хĕрлĕ лођ! турĕ.

— Савнă Микита!— нăйăлтатрĕ ўпре пек Укахви. Шуйтан çăнăхне çинĕшĕн пирĕн çийе турă ылхану йађĕ! Ой, пĕтрĕм!...

— Мĕ-н?—урай варне кусса çитнĕ Микита топ! ђарăнђĕ.—Сан ĕçĕ-и ку?...

Микитапа Укахви урайĕнђе уткăнайса çўреççĕ. Пĕр-пĕрне, топ! пырса çапăнаççĕ те хĕлхем йолт! сирпĕнет. Çур сехет урсан, иккĕшĕ те, лăпланђĕç.

— Тырăсем пиркийех пĕтрĕç—терĕ анђах кўршĕрен таврăннă Путап.

**Хв. Уй-Хир**





# Хура сăнсене, хĕрлĕ сăнăпа.

## Маттур Романăв.

Асăă Куснар (Куславка р-нĕ) йалĕнђе пуранакан Роман Иванĕ вăрман ортĕрĕ илсе килсе, ђухăнсене вăрман сахал пађĕç тесе суйса, вăрмана пуйан Ерхип Йăванĕпе илђĕç.

Маттур та ес, Раман Иванĕ,
Пуйан çынна тивлетлĕн пулăшан,
Ђухăнсене вăрмансăр хăваран.
Асту! Вăрман ху пуç çине йăванĕ,
Ун ђух тĕрĕссипех те калан,
Анђах кăпт кайарах пулан.

## Куљтестафет.

Шуркасси йалĕнђе (Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) уђђитлĕсем хут пĕлменнисене вĕрентес тĕлĕшпе ним те тăрăшмаççĕ. Йалта 30 çын йахăн хутла пĕлменнисем. Çапах ликпунт уçмарĕç.

„Пилĕк çуллăх“ виççĕмĕш çулне
Тĕттĕмлĕхе тĕппех пĕтермелле,
Нимрен ытла Шуркасси йалне
Пукçир çине ђасрах пирн илмелле.
Уђђитлĕсене аспуккă памалла.
К, У, Љ, Т, Е, С, Т, А, Ф, Е, Т, Ă
Саспаллисемпе паллаштармалла.

## Уйук.

Алтанкассинђе (Елĕк р-нĕ) хут пĕлменнисем пит нумай. Вĕсене вĕрентес тесе хваттер те тупнă. Пĕрре ликвитаттăр пырса карĕ те, урăх пырса та курман.

Алтанкасси тĕттĕм йал,
Тĕттĕм йал та мĕскĕн йал:
Хут пĕлменнисем нумай,
Вĕренмехçке çуккă май,
Ликвитаттăр пырсађђĕ,
Халĕ тарса пытанђĕ.
Йалсовеђĕн куçĕ çук,
Ĕçĕсем те ун „уйук“

## Вăрман...

Тавăшкасси (Çĕрпӳ р-нĕ) йалсовеђĕ вăрман хатĕрлеме пайан кунђђен те пĕр çын йаман.

Ех, вăрман, вăрман, вăрман,—
Пире вăйхал паракан,
Мĕншĕн есĕ хуйхăран?!
Сана касма çын йаман.

## План.

Сарпа касси йалĕçтăвкомĕ (Шуп. р-нĕ) ку таранђђен те çураки планне туман. „Хуђахмат“ колхосĕ те çавах.

Таçта, сивĕ тунтăрта
План çӳрет йура сирсе,
Унăн хырăм выçă тет,
Çур пуласса кĕтет тет.
Сарпа-касси йалĕнђе

## Хĕвел мĕнрен кулаť?

Коппинсойусăн 10 пин метр маттери ахађ выртнă.




**Хресђен.** Йытă утă купи çинђе выртаť, хăй те çимест, ыттисене те çитермест, тетђĕç. Йытă тесе ваттисем Коппинсойус правлени ђленĕсене каланă иккен.

---

Колхос хытă çывраť, тет.
Çураки планне тума
Тĕлĕкре те курмасť, тет,
Вăл та çура кĕтет, тет.

Тороней П.

# АШӐ ВЫРАН ШЫРАТ̆.

Пӗр йалта вӑрӑм ҫӳҫлӗ, кӗске ӑслӑ пуп пурнат̆, вӑл... ђимӗрха, вулакансем, пытарса тӑрас мар, тӳррипех каласа парас. Мӗн пытарса тӑмалли пур пулнӑ ӗҫ ҫинђен? Акӑ вӑл истори:

Канаш районӗнђе Йантиккӑвӑ йалӗ пур (илтнӗ пулӗ?) Илтнипе ҫеҫ мар унта кайса пӑхас пулат̆. Курса ытарма ҫук вӑл йала. Илемлӗ йал, ҫутталла туртӑнат̆. Ђухӑнсемпе вӑтамсем колхос тунӑ. Пӗрлешсе ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсен пурнӑҫне тата аваплатма тӑрӑшаҫҫӗ. Кӑҫал ҫуракине трактӑрсем килеҫҫӗ вӗсен районне.

— Тайош хурҫӑ лаша! Толой тӗн сӗрӗмӗ!—теҫҫӗ малта пыракан хресђенсем.

Йалта ђиркӳ пуҫне тӑратса, ӗлӗкхи хӗнхурлӑ пурнӑҫа астутарса ларат̆.

— Тан, тан, тан-н!—тарӑхса ђӗнет вӑл халӑха.— Тан, тан, тӑнкӑл—танн!

Хресђенсем тӗн сӗрӗми сийенне сиссе ҫӳреме пӑрахрӗҫ ђиркӗве.

— Ҫӑва патне кайтӑр, ним усси те ҫук, сийенӗ— шутласа та кӑлараймӑн,—теҫҫӗ вӗсем пухӑнса ларнӑ ђухне.—Ӗлӗк те хамӑр тӗттӗм пирки нумай ҫӳренӗ.

Ҫпектаккӗлсем лартаҫҫӗ, кӗнеке-хаҫат вулаҫҫӗ, пухусене ҫӳреҫҫӗ, пӗр сӑмахпа каласан йӗркеллӗ пурӑнма тӑрӑшаҫҫӗ. Кӗлле ҫӳрекен ҫук. Вот карђӑксем те сиснӗ, ҫӳремеҫҫӗ вӗсем те.

Аптӑрат̆ Йантиккӑвӗ пупӗ Сокколов Каврили, тӗрлӗрен хӑтланса пӑхат̆, акитатси тӑват̆, хӑратса та пӑхат̆:

— Вилсен вутра ҫунтараҫҫӗ кӗлле ҫӳремесен, астӑвӑр, анттихрис хыҫҫӑн ан кайӑр,—хӑрат̆ат̆ вӑл. Хӑракансем ҫук.

— Ан супӗлтет,—теҫҫӗ ӑна хирӗҫ,—ҫук туррупа хӑратаймӑн пире, ӗлӗк те улталаса пурӑнтӑн. Пухусем тума пире хваттер кирлӗ, тасалха есӗ хысна ҫуртӗнђен. Сокколов пуп хваттерсӗр тӑрса йулат̆. Хваттере йаракан та ҫук.

— Турӑ патӑр сана ӑшӑ хваттер,—систереҫҫӗ хресђенсем.—Турӑ пурне те сӑмахпах тума пултарат̆ вӗт вӑл? Йӑлӑн та (кӗлтума ӑста) турӑ ҫурт туса парӗ-и тен?

Турӑ ҫинђе нумай шанђӑк ҫуккине аван пӗлет вӑл Сокколов пуп, хресђенсене ҫеҫ вӑл, ђейепе, „турӑ ҫине шанма“ вӗрентнӗ.

— Турра кӗлтӗвас пулат̆, турӑ парӗ.

Хаљђен ӑна „турӑ“ мар, турра ӗненекен хресђенсем, вӑл „вӗрентнӗ тӑрӑх“ пулӑшса тӑнӑ. Халӗ ӗнтӗ пурнӑҫ урӑх, ҫутӑ ҫӗнтерпӗ май, тӗттӗмлӗх пӗтсе килет.

Ҫиленет, конешнӑ, Сокколов пуп, халӑха та, ҫук „туррине“ те ҫиленет.

— Наврйат-ли есӗ мана пулӑшӑн,—сулат̆ вӑл аллине ҫук турри ҫине.—Наврйат-ли!

Халӑха хӑратма шут тытат̆, ҫавӑнпа пӗрлех Канаш Рӗкӗн атӑмпайне те „сехрине хӑпартасшӑн“.

— Укҫа памасан, ђорт-ли, ӗҫлеме,—шухӑшлат̆ вӑл матӑшкипе,—хваттер ҫук, ку пӗрре,—хуҫса хурат̆ пӳрнине—ҫынсем ђиркӳве ҫӳреме пӑрахрӗҫ, йавӑлсем,—сӑптӑрат̆ вӑл вӑрӑм ҫӳҫне,—турӑра шанђӑк ҫукне епӗ такҫанах пӗлетӗп, ку виҫҫӗ,—тӑратат̆ вӑл карттин ҫинђи „Саваоф“ пек пуҫ пӳрнине.

— Усси ҫук?

— Ҫук.

— Шанђӑк ҫук?

— Сталӑ пыт̆ пупран тухас пулат̆.

— Такҫанах тухмалла.

Хут илет те атӑмпайне ҫакӑн пек сайавлени ҫырса парат̆ (вырӑслах пиђетлетпӗр).

## В Канашский районный адмотдел.

Служитель культа при церкви с. Янтикова, Канашского района, Соколова Гавриила.

Заявление.

За неимением квартиры и за халатное отношение к церкви верующих групп, прекращаю службу в селе Янтикове с 25 сего ноября месяца и по сему прошу названный адмотдел снять меня с учета.

Служитель культа **Гавриил Соколов.**

Ђутак, вҫутки Сокколов пуп, хӑш-пӗр пупсем пек, «епӗ ӗлӗк ӗненеттӗм, халӗ ӗненме пӑрахрӑм» тесе тӑмаст̆ (пупсем хӑйсем те ӗненменнине пурӗпӗрех халӑх пӗлет терӗ пулӗ), «Хваттер ҫуккипе, тата ӗненекенсен ушкӑнӗ ђиркӗве ҫӳременнипе» уђђотран тухатӑп тет.

— Укҫа памасан, ђорт-ли, ӗҫлеме!

Атӑмпайӗ ӑна уђђотран кӑларат̆, конешнӑ.

— Пошалстӑ! Ҫитӗ ҫынсене улталу!

Йантиккӑвӑ халӑхӗ те савӑнат̆, икӗ хваттер пушанат̆, пӗри ун хваттерӗ, тепри ђиркӳ, хӑт̆ клуп ту, хӑт̆ шкул уҫ.

— Сирӗлтӗрех пиртен,—теҫҫӗ кулкаласа. Шыра ухмахсене.

Унӑн ђӑнахах урӑх вырӑн шырама шухӑш пур пулас.

„Йантиккӑвӑра ӗҫлеме ђарӑнап“ тенӗ. Урӑх йала, тӗттӗмрех кӗтессе кайса тӗн сӗрӗмне сарма шухӑш пур пулас, анђах тупайӗ-ши вара „ӑшӑ вырӑн?“. Мӗншӗн тесен йал ҫуталса пырат̆, тӗттӗм кӗтессем пӗтсе пыраҫҫӗ, тӗн сӗрӗмӗ ҫухалат̆. Ҫапла мар-и, вулакан?

**Ҫ. Йалавин.**

## Кулак ђирӗ.



— **Кулак:** Йулташ хвершӑл, тархасшӑн пӑхса йар ӗнтӗ мана.

— **Хвершӑл:** Мӗн ђирпе ђирлерӗн ара?

— **Кулак:** Пыр ђирӗпе. Сас ҫӗтнипе антӑрарӑмҫке.

**Мӑђкаш**



### Пухалтерире.

— Вăхăт пит хăвăрт малалла кайса пыраť. Пирĕн пăланне октапĕр уйăхне те çитеймен, 1931-ĕш çул самса тăрнех пырса ларнă. Тĕлĕнмелле!

### Ах, шелмă.

Тапакпа çпекуђантси тăвасси вĕтме пĕлмеç. Вăл тĕлĕшпе Тĕпĕçтăвком йышăннă постановленийе иурнăçа кĕртмеллех.

— Ма есĕ ху 7 пуса илнĕ тапака 2 тенке сутатăн?
— Халăх укçине мопилисатсилес тетĕп.

### Вăл хăй майлă сыхланаť.

— Пођшевиксем кашни çулах вăрçă пулаť те, вăрçă пулаť, тесе сехреме хăпартаççĕ.
— Кашни çулах вăрçă пуласси çинђен асра тытса сыхлăх ĕçне ўстерме хушаççĕ çав.
— Апла та... Кашни çулах 20-шер пăт тăвар хатĕрлесе хума пит йывăрçкеха: илнĕ тăвар ампара мар, сарайне те вырнаçаймĕ апла.

### Кĕнђелерте.



— Ой, мĕн ишĕлсе анђĕ ара леш пўлĕмре. Çурт ђĕтренсех карĕ.
— Çĕмĕрлмелли йапалах мар. 1930—мĕш çулхи отђот ўкнĕ.

### Пулăшнă.

— Рак ђирўнтан мĕнле хăтăлтăн?
— Хура хăма çине ўкнĕ хыççăн.

### Вăл кулђанмаст.

— Хĕлле çилтăман çанталăкра ўкалес кайакансем нумай пулакан. Çулсем тăрăх майаксем лартса тухрăри?
— Уншăн пулсан пирĕн ĕçсем лайăх пыраççĕ. Майаксене епĕр 1927-мĕш çултах лартса тухнă.

### Амаљ.

— Тарлаттаракан амаљ мĕн йатлă ара?
— Йĕплĕ çăмах йатлă. Вăл ђтакамађта тарлаттараť.

## Кĕнђелепе.



Ларма сирĕн пата килес терĕм. Килте сĕрĕм тиврĕ.
- Сĕрĕм?! Пуп пырса кайрĕи мĕн?

### Шупашкар хула копператтивĕн прикашђăкĕсене сут тунă хыççăн

— Çав тери сивĕ. Сирĕн прикашђăк картуспах ўрет, çĕлĕк тăхăнмасť.
— Çĕлĕк тăхăнма хăраť. Вăрă çинђе çĕлĕкĕ çунаť тенине илтнĕ вăл.

### Веђђĕрта.

— Пуçна çăватăни есĕ?
— Çăватăпçке.
— Çăваймастăн пуљ çав.
— Çăвайманни ăçтан паллă?
— Пылђăклă шухăшсем нумайран.

### Килĕшмен йапала.

Шупашкарти çуртйĕр кооператтивĕнђе пай укçине тўллесе татманнисем нумай.

— Хваттер килĕшми пулђĕ.
— Лайăхђĕçкеха сан хваттерў. Мĕншĕн килĕшмест.
— Пай укçи тўллеттерессĕ.

### „Тĕлĕнмелли çук"

— Ма ĕçĕр, иншенер йулташсем, Ђăвашкино çуртне туса пĕтермесĕрех çурăлса каймалла турăр?
— А—а вăл нимĕн те мар. Ана халĕ йусаманиçха. Йусанă хыççăн çурăлнă пулсан, питех марђђĕ...

### Унăн ĕçĕ.

— Еп ыранхи тулмалли ĕçе пайанах турăм.
— Мĕн турăн?
— Ыранхи вырăнне пайан канатăп.

### Çупа кĕр.

— Кăçал кĕркунне çитес уйăхсенђех пуласран хăратăп.
— Ăçтан апла пулма пултараť.
— Ав, хаçатсенђе çыраççĕ: пођшевикла çураки килет, теççĕ. Пирĕншĕн вăл хўйхăллă кĕркунне пулаť.

# Шампа Михали Кӑвапа Иванӗ патнӗ йанӑ ҫыру.

«Савӑнӑҫ пултӑр сана, хӑйматлӑх кӗрӳ! Йепле пурӑнатӑн? Нумай пулат сана курманни. Ӗлӗкхи саманара пӗрле ҫӑкӑртӑвар ҫинӗ, пӗр сывлӑшпа сывласа пурӑннӑ,—халӗ сан кӑмӑлу теплеӆӆӗ вара? Ман пурнӑҫ пит наӆарланса пырат, куллен-кун такӑнса пыратӑп. Хуплпрӗ мана „кулак" йаӆӗ. Хырӑма курсанах—«ав кулак—клас тӑшманӗ», теҫҫӗ. Ӑҫтан кулак пулатӑп епӗ? Нихӑҫан та ҫынпа ҫапӑҫман, ҫынна усал туман, турӑ ҫуртне йаланах ҫӳренӗ, паӆӑшкӑсене нихӑҫан та кӳрентермен, ҫук ҫынсене (ӆухӑнсене) вӑй ҫитнӗ таран пулӑшнӑ. Сӑмахран, ӆухӑнсем выҫӑ аптрасан, вӗсене выҫӑ вӗлерессшӗн мар пулса, вӗсен ҫӗрӗсане вун-вуникӗ ҫул таран мала тара илсе укҫа парса хуни темӗн ӆухлӗ те пулнӑ; ӆухӑнсене выҫӑ лартасшӗн мар пулса, вӗсен акнӑ тыррисене хӗллех укҫа парса илсе хуни те пулнӑ. Макар арӑмӗ аӆисемпе выҫӑ аптӑранӑскере ҫурпилӗк сӗлӗ вырмаллах сысна пырши-пакартине парса йатӑм. Манӑн темӗн ӆухлӗ те ун пек ӆухӑнсене пулӑшни. Комуниссем ӑна хисепе хумарӗҫ, сас прависӗр хӑварӆӗҫ. Пурӑнса пӑхха ку ӆухне сасӑсӑр. Ни, тпру! ни, ну! Арӑмпа аӆамсене права пама май килмӗ-ши тесе, халӑх суӆӗ урлах арӑмпа уйӑрӑлса пӑхрӑм, аӆасем манран откас туса хаҫат урлӑ йевитлерӗҫ, анӆах нимӗн усси те пулмарӗ. Уйӑрӑлнӑ хыҫҫӑн хам арӑм патне тарҫа (рапотнӗке) кӗрсе пурӑнтӑм; патрак шутне кӗме шутланӑӆӆӗ. Вӑл та пулӑшмарӗ, ӑна та хисепе илмерӗҫ, хӑйамат комуниссем.

Ҫитменнине иртнӗ ҫул йалта колхос турӗҫ, ҫур йал ытла ҫырӑнӆӗҫ, пирӗн пеккисене наӆар ҫӗр ҫине хӑваласа йаӆӗҫ. Колхосӗ куллен кун ӳсет, тен йалӗпех кӗрсе пӗтӗҫ-и тата. Епӗ те кӗрес терӗм те, йахӑнне те йамаҫҫӗ.

— Йалӗпе колхоса ҫырӑнатпӑр та, **сан пек клас тӑшманӗсене ликвитирӑват** тӑватпӑр, тет пӗркун Ванӳшке Мӗтрийӗ.

Пӗр пӗрӆӗ сухалӗ шӑтман, ҫапах ӑна колхос пуҫлӑхӗ туса хунӑ. Ӗлӗк ман сурӑхсене уйа ҫитерме илсе ҫӳретӆӗ, пӗр ӆӗлӗ ҫӑкӑршӑн таҫта йарсан та ӆупатӆӗ, халӗ шӗвилкке колхос пуҫлӑхӗ. Ех, самана, самана!

Ну, йуратмастӑп-ҫке ҫав Ванӳшке Мӗтрине! Ӑҫта ҫӳрет-ши хӗрлӗ автан ҫавӑн пек ҫынсемшӗн?!

Пӗр кун пӗр тӗттӗм каҫ унӑн сарайӗ хыҫне ҫав шухӑшпа пынӑӆӆӗ те, анӆах шуйттан йытти ура хырӑмне ҫыртса ҫурса пӑрахрӗ, аран киле тарса ӳкрӗм. Хӑйаматсен йыттисем те тем тӗрлӗ ӑслӑ.

Пӗр кун тата кӗтмен ҫӗртенех ҫакнашкал инкек тӗл пултӑм: пыратӑп ҫапла ҫӗрле колхоҫнӗксен анкартипе (авӑн картине) ҫав хӗрлӗ автан шухӑшӗпех, унталла кунталла пӑхкалатӑп, хуралҫӑ тӗл пулас пекех туйӑнат. Акӑ утӑ капанӗ ҫумӗнӆе ҫыран хӗрри йенӆе тӑрат пӗр хӗрлӗ ӗне,—ӆисти Ванӳшке Мӗтрин ӗни тӗслех. Пуҫлӑх темерӗн шел мӑна,—ӗнине утӑ капанӗ ҫумнех кӑкарса тӑратнӑ. Пастай-ха, вӗрентӗп епӗ сана, терӗм ӗнене курсан. Нумай шухӑшламарӑм тумарӑм, тӗртсе йаратӑп кӑна ҫыран хӗрринӆен ҫырмана. Мок! тунӑ сас ҫеҫ илтӗнӆӗ ҫырма тӗпӗнӆен. Аван турӑм. Вӗҫтеретӗп килелле.

— Атте, пирӗн хӗрлӗ ӗне кӗҫӗр киле таврӑнаймарӗ; таҫта выртса ҫӗр каҫӗ ӗнтӗ вӑл?—терӗ мана хӗраӆа киле ҫитсе кӗрсенех.

Ҫавӑнтах ман ӑша пӑшӑрхантаракан шухӑшсем кӗрсе кайрӗҫ. Хам нимӗн те шарламастӑп.

— Ей, клас тӑшманӗ! Мӗншӗн выӆӑхна ӆипер пӑхмастӑн,—ӗнӳ пирӗн анкарти хыҫӗнӆи ҫырмана кайса вилнӗ вӗт?—терӗ ӆӳреӆерен ирех тепӗр кунне пӗр колхоҫнӗк.

Ҫӳҫ-пуҫ вирелле тӑрса кайрӗ кӑна илтсен. Пӑх ӗнгӗ; хам ӗнене хамах вӗлертӗм. Кӑмӑл тулса ҫитнипе ӆупса тухатӑп сарайне ҫакӑнса вилес шутпа, анӆах..... вӗрен шел пулӆӗ.

Мӗнле пурӑнмаллаха, малашне те капла пулсан? Тарас пулӗ тетӗп, хӑйматлӑх кӗрӳ, **ликвитирӑват** туса пӑрахаӆӆен ӑҫта та пулсан куҫ курман ҫӗрех. Тен ӑҫта та пулсан колхосра, йе совхосра сысна кӗтме кӗреймӗп и. Анӆах сыснапа каӆака пек усал выӆӑх та ҫук. пӗр ӆупма тытӑнсан хӑваласа та ҫитес ҫук; хам хырӑм пирки епӗ ку ӗҫре те йурӑхлӑ пулас ҫук. Мушӗт трактӑр парӗҫ, трактӑр ҫине ларса вӑрӑм пушӑпа шартлаттарса хӑваласа ҫӳремелле пулӗ. Ӗсӗ йепле шутлатӑн, хӑйматлӑх кӗрӳ? Ҫырса пӗлтер, пушалӑс ӑ, **ликвитирӑват тӑваӆӆен**, урӑхла каласан,—ҫуркуннеӆӆен.

Хурлӑхлӑ салампа Шампа Михали». №.

# Вутпуҫҫисем.

***Лайӑх пуҫлӗк.*** Аслӑпатӗрйел районӗнӆи РОКК органисатсийӗ мӑйне пӑрнӑ та, ӆашлаттарат ӑйха. Пур пек йапаласене: 400 тенкӗ укҫа, тӗрлӗ кӗнекешурналсене пуҫ айне пусарсах хунӑ. (Фейӑ)

**Ампулатторипе мунӆа.** Йӗпреҫри пуӆнитсана хура кӗртенпех ремонт тӑваҫҫӗ. Ӆирлисене пӑхакан вырӑн хреҫӆен мунӆинӆен те пӗӆексӗ. Ремонтне пӗтериӆӆен тата миҫе хура кӗркунне пуласси паллӑ мар. (Аҫури).

**Шӑнтакан уӆиттӗл.** Шупашкар районӗнӆи Ӆарӑшкасси уӆитӗлӗ Топрынин вӗренекен аӆасене, накасани йӗркипе, 20-25 кратӑс сивӗ ҫине кӑларса шӑнтат. Шӑнтакан уӆиттӗле сотвос инҫпектӑрӗн ӑшалантарса йамалла.

**Выӆӑх витипе кино.** Канаш хулинӆе Сыхлӑх ҫуртӗнӆен выӆӑх вити тума тытӑннӑ. Тӑвакансем ҫурт пуҫлӑхӗсемпе хуликансем. Ыгла та сивӗ, таса мар, тет вӑл ҫуртра, ҫавӑнпа та халӑх унта кино курма ҫӳресшӗн мар. Выӆӑхсене вӑл ҫуртран хӑваласа кӑларса, Шивотноводсойус аллине памалла.

**Наӆар мар.** Шупашкарти профшкол йусаса панӑ трийӗрпа „Ҫӗнӗ вӑй" колхосра икӗ ҫын пӗтӗм вӑй па кӗрмешсех икӗ кун хушшинӆе 8 пӑт вӑрлӑх тасатнӑ. Машшинне пит наӆар йусаса панӑ, теҫҫӗ. Тӗрӗс мар ӗнтӗ ку—наӆар мар, пит йапӑх йусаса панӑ, темелле.

**Пӗлтӗрхипе кӑҫалхи.** Кипек-кассинӆе (Шуп. р.) комсомолӗссемпе пионерсем иртнӗ хӗлле тимлесех, укҫа парсах, пухнӑ уттилсырйо йалта саланса выртат... кипекленсе кайма пуҫланӑ. Ҫавна пухакан Кипек-кассинӆи ҫамрӑксем хӑйсем те кипекленсе кайма пуҫламанши? Пӗлтерӗрха пире.

**Вӑрнар районӗнӆи йулашки арман хуҫи.** Вӑрнар районӗнче те пӗр епӗ анӆах арман хуҫи шутӗнӆе тӑратӑп, тет Пуканкӑри Ентриккӑв Порис,—муҫей ваӆӆи усраҫҫӗ пулмалла мана, мӗншӗн тесен налокне те ӆухӑнсен шуӆӗпех тӳлетереҫҫӗ, тет. Ӳпкелешет ҫын. Муҫей ваӆӆи йулса, науккӑшӑн усӑллӑ йапала пуласшӑн мар. (Саттурн)

# Йĕплĕ çăмах хыпакансем

## Тункатасем тăвасси.

Йетĕрне уђлеспромхосĕ ĕçлемен теме пултарай-мастпăр. Ĕçленĕ вăл: каскасем хатĕрлес утарлă кварттăлти сатанийе ик уйăх хушшинђе 2 прођђăн çурă, происвотстă канашлăвĕ йышăннине 1 прођђăн çурă ытларах тултарнă. Ĕçлемесен вăл та пулас çук.

Есĕр ĕçлемен теттĕр. Каскасем сахал тунă та... Хăйсем тĕ вĕсем (промхосра ĕçлекенсем) тунка-тасемçке. Унпа та çитĕ.

## Çу вăрри.

— „Ăçтан тупас çу вăрри. Вăрламалла мар вĕт, тет Йĕпреç райĕçтăвкомĕ.

Вăл теккапĕрĕн 16-мĕшне çу вăрри хатĕрлес плана 7 прођђăн çеç тултарнă. Çав вăхăтрах Шăнкăртам районĕ 77 прођђăн тултарнă.

Йурĕ пире Йĕпреç ђăвашсене. Епĕр Шăнкăртам районĕнђи тутарсем мар—пире хӳрере те йурĕ, теççĕ райĕçтăвкомра ларакансем.

Йĕпреç хӳрере пырат, тесе йăнăш каларăмăр епĕр. Вăл хӳрере пымасть, хӳрере... ларать анђах.

## Криттĕклесех пулать.

Пĕр пуçлăхран ыйтнă:

— Мĕншĕн есĕ хăна критĕкленине хирĕçетĕн?— тенĕ.

Лешĕ каланă:

— Криттĕклекенпе хирĕçетĕп, мĕншĕн тесен крит-тĕк хăй манпа хирĕçет, тенĕ.

Апла пулсан та, Шупашкар уђлеспромхосне пирĕн криттĕклесех пулать. Каçарăр ĕнтĕ—йăли пирĕн çавăн пек те.

Шупашкар уђлеспромхосĕ ик уйăх хушшинђе çак утарлă кварттăлăн планне, вăрман хатĕрлес тĕлĕшпе 6 прођђăн, хатĕрленине тийесе йăрас тĕлĕшпе 4 прођђăн тултарнă.

Уђлеспромхос, плана ун ђухлĕ тултарма та йăвăр пулнă пулĕ сана. Пуринђен ытла промхос пуçлăхне йăвăр килнĕ. Канас пулать йăвăр ĕçленĕ хыççăн. Нумайрах канмалла пултăр тесе, промхосран кăла-рас.

## Туйа!

„Шупашкар туйи, шурă туйа"... шур туйапа çап-малла Шупашкар районĕнђи халăха вĕрентес ĕçе пăхакансене.

Районĕпе 300 ађа шкул тулашĕнђе çӳреççĕ. Пот-росткă шкулĕсем 14 выранне 2 анђах ĕçлеççĕ. Çитĕн-нисене 44 прођђăн çеç вĕрентме тытăннă.

Йапăх? Йапăхне йапăх та, ытла йапăхах мар ĕнтĕ, райĕçтăвкомра ларакансем хăйсем хут пĕлеççĕ вĕт,— унпа та çитет.

## Хăйах курăк.

Çĕмĕрлери хула копператтивĕ рклатсем, аванссем пухас плана 221 прођђăн пурнăçа кĕртнĕ. Çав вăхăтрах хăшпĕр копператтивсем аванссем пухай-маççĕ, аванс тумламĕсене çеç пухкалаççĕ.

Шупашкарти рапођђисен копператтивĕ плана 10 прођђăн кăна тултарнă, Йетĕрнепе Шăнкăртам райпосем нимĕскер те пухман.

Çапла ĕçсем! Патшалăхăн Луковой инçтиттуђĕнђи В. Р. Виллямс професcăр тунă сăнавсем тăрăх, хăйах курăкĕсене утă çулма тухађђен икĕ ерне малтанрах çăлса тăкма кирлĕ. Иртерех çăлса тăксан, хăйахран та лайăх утах пулать, тет. Çав копперативсенђе ларакансене те срокран малтанрах правленинђен çăлса кăларсан, тен вĕсенђен те ђипер краштăнсе-мех пулма пултараççĕ. Сăнавлăх çăлса тăкса пăх-малла марши, краштăнсем!

## Май килнĕ ђух майлашать.

Шупашкарти „Трушĕнĕтсă" ертел правленинђе, тата пухалтеринђе ĕçлекенсем ђленсем валђи панă палђтосене, прӳккисене хăйсем валђи йӳнĕ хакпа илсе йулнă—хăйсем ĕсем икшер палђто, хĕрарăмсем прӳккисем илнĕ. Çуралман ађисем валђи кĕпесем илекенсем те пулнă.



— Ку тумтирсемпе ĕнтĕ 20 „петтилеткка" та пурăнма пултаратăп. Тата çавăн ђухлĕ илсен хамăн ĕмĕре тăхăнмаллăх çитеђђĕ.

# ТАСАТРЁÇ.

Суйанăв Петĕрĕпе Каврӑç Микулайĕ пайан ирех колхос кĕнҫелерне кĕрсе карĕç.

— Никçан та капла пулакан марҫҫĕçке, йепле пулҫĕ ку, пуху тăваççĕши, пуху тăваççĕ пуҫ,— хăйне хăй лăплантаҫĕ Састăп Çтаппанĕ.

Суйанăвпа Микулай кĕнҫелерти сĕтел хушшине кĕрсе ларсан, пĕр-пĕрин çине ĕнепе пăрушĕ пек хире-хирĕç куçран пăхрĕç. Куçран пăхнипех калаçса илҫĕç пулмалла, иккĕшĕ харăс шкапа уçса пĕрер çĕклем „Дело №" текен кĕнекесене туртса кăларса сĕтел çине кĕлте урапи пек купаларĕç. Найантарах кĕсре туртайас та çук.

Çĕнĕрен пĕр-пĕрин куçне йĕплесе илҫĕç те иккĕшĕ харăс: хăш кĕнекинҫен ĕçе пуçлар?—тесе тутисене ҫĕтретрĕç.

Анҫах хăш кĕнекипе ĕçе тапратассине кĕтесри ҫалăшнă кăмака ним те шарламарĕ. Суйанăв претçетатĕл майĕпе:

— Тырпул валеçни çинҫен çырнă кĕнекине пăхса шута илер, вара отҫот пулҫĕ те, ыттине кайран та, терĕ.

Каврӑç Микулайĕ килĕшрĕ. Ĕçе тытăнҫĕç.

Кĕнекине пĕр листă уçсанах кĕнеке варринҫен пĕр тĕрленĕ хут сиксе тухрĕ. Ку мĕн?—тилмĕрсе пăхрĕç.

— Пулашки хут ыйтатпăр: хăвăр йалти хресҫенсемпе колхоçнĕксен çураки валҫи мĕн ҫухлĕ вăрлăх тасатмалла, çавна пĕлтерсе, ответне 1931-мĕш çулхи йанварĕн 20-мĕш кунĕҫҫен пирĕн пата тăратăр.

Райколхоссойус пуçлăхĕ Çеркушкин.

Шăши тытнă кушак аçи пек тĕрленĕ хут тăрăх мăрласа тухрĕç.

— Мĕн шуйттан тăвас, калаха, Микулай?—ыйтрĕ Суйанăв

Пĕр шутламасăрах, тĕк шăтман курак ҫĕпписем пек, çăварне карса:—хăçан çырнă çак хута?—ыйтрĕ Микулай.

Пăхрĕç хут çине. Хуҫĕ колхоссойусран, 1930-мĕш çулта теккапĕрĕн 28-мĕшĕнҫе тухнă. Ҫислине курсанах, пăшалу пек тутинҫен пулеметрен пулĕ сирпĕннĕ пек, сурҫĕксене сирпĕтсе, сĕтел çинҫи таракансене пĕршерĕнех тартса пĕтерсе, вăркăнтарҫĕ хута Суйанăв. Вăркăнтарнипех ĕç пĕтмерĕ. Шур хут татăкĕ илҫĕ—

Н-ри РИК-е.

Пирĕн И.Ĕ.К-ри йалсоветҫĕ во главе предçетатĕлйа Салмин и у нашем колхоçе кте я являйĕмсим холовам холова, вăрлăха, навсекта как пĕлтĕр так и кăçал пĕр пĕрҫĕ те тазатманни йулман, çим заверйайăм тесе алă пусрĕç. Çырнă хутпа Састăп Çтаппанне сроҫнăй тесех РИК-а ҫуптарҫĕç. РИК-а çитсенех Çтаппан хутне çĕлĕк ăшĕнҫен кăларҫĕ те, пĕр çамрăк аҫана тыттарҫĕ. Çамрăк аҫа вуласа кулкаласа:

— Молотсы, вăрлăха тасатнă еппин, терĕ те пĕр пӳлĕме кĕрсе карĕ.

„Вăрлăха пĕтĕмпех тасатнă, молотсы" тенĕ сăмах çеç илтрĕ Çтаппан. Çул тăршипех ку сăмахран тĕлĕнсе, йала кĕрсе кайрĕ.

Анҫах килте те вăрлăх тасатас шухăш Çтаппан пуçне çĕмĕрет.

— Мĕнле-ха капла? Çынсем вăрлăх тасатнă, епĕ сисмесĕрех йулнă? Тĕлĕнмелле!

* * *

Тепĕр кунне ирех колхоçнĕксенҫен пĕри килĕренех:—халăх çине тухăр! Отҫот пулаť, çĕнĕрен суйлатпăр, икĕ хут ан ҫĕнтерĕр!—тесе колхоçнĕксене пухăва йăхăрҫĕ.

Халăх пӳрҫĕ лăках тулнă. Суйанăв отҫот тăваť.

— Малтанах çакна калам. Колхосра пурăнăç канлĕ маррине хусамăрах пĕлетĕр. Пирĕн лашапа Тиххăн кĕсри пăстойанно вăрçаççĕ, кашнă кунах тапăçаççĕ. Тата çамрăксем ăмăртса ĕçлесе пиллĕк çурăма хăвармарĕç. Ну-с, çапах та тыррине аван валеçрĕмĕр. Анҫах çиме çитес çук, акă тĕслĕх, Сăсар арăмне йетакпа ыраш 9 пăт çеç тиврĕ.

— Айуй, Петĕр, ма суй!..

— Сана сăмах паман,—ҫарҫĕ пуху пуçлăхĕ.

— Кив Куçмана 8 йетакпа 22 пăт тиврĕ.

— Ара Петĕр кирлĕ мара ма...

— Ан йăслăр тенĕ йăнăшрĕ пуху пуçлăхĕ.

— Амуртси Çтаппанне 17 пăт та 56 кĕренкке.

— Суйаť вăл!—кăшкăрҫĕ халăх.

— Шута тĕрĕс илмен!—хушрĕç хыçалтан.

— А-руу, Петĕр улăм, ма шуйатăн, алă шакăр пăт тишти ыраш пурана кӳртрĕм, шĕлли мĕнĕпе 103 пăт пулҫĕ. Çиме мар патшалăха пама та шитет,—селпӳлерĕ тăкăнса пĕтнĕ шăлĕсемпе Сăсар арăмĕ.

— Епĕр 8 йатакпа 119 пăтран иртертĕмĕр, ма суйатăн, колхос салатасшăни? — кăшкăрҫĕ Куçма.

— Суйаť, суйаť вăл!

— Епĕ 69 пăт.

— Епĕ 81 пăт.

— Ара епĕ те, хам уйăрăлса тухнăранна та кăçалхин пек тырă туман,—тĕвĕлерĕ Хветут.

— Ан йăслăрха, итлĕр,—сăмах хушрĕ Састăп Çтаппан арăмĕ.

Пурте шăп.

— Ĕнер манăн старик темле хутпа РИК-а карĕ. РИК-ра писсăр теççи çав, старик панă хута вуласа пăхрĕ тет те, йалĕпех тасатнă, молотсы, тесе каларĕ, тет. Акă старик хăй те килĕ, хвелшĕн суймастăп. Хăш кун вăрлăхне тасатнă, кам тасатнă, ма пире ҫĕнмен?

— Тытса хупас ăна хампара!

— Тырă тасатмасăрах актараť.

— Трийĕрсăрах йултăмăр.

— Хăйне тасатас!

Хурт вĕлли пек йанраť халăх пӳрҫĕ. Ҫарма çук. Суйанăв пĕр сăмах ҫĕнмест.

— Парăрха сăмах,—ҫĕтрекен пулнă сассипе ыйтрĕ Суйанăв.

—Тавай пире трийĕр!—кăшкăрҫĕ халăх.

— Есĕ мошелник тырă тасатмасăр актарасшăни?

Урам йенҫи ҫӳреҫе йанаххи çине ҫавсаланса ларнă ликвитаттăр ҫăтаймарĕ, сăмах ыйтрĕ.

— Йулташсем!

Пурте шăп.

— Епĕр капла шавлаҫҫен, ĕçе вырнаçуллă тăвăпăр. Ҫăнахах епĕ ĕнер ликвитаттăрсен совешҫанине карăм та РИК пуçлăхĕ сирĕн йалсоветҫĕ—çуртри вăрлăхне пĕтĕмпех тасатнă, малта пыраť сирĕн йал, терĕ. Акă Састăп Çтаппанĕ те çитрĕ, вăл та илтнĕ ун çинҫен.

# ТАКМАК.

Микулай патша ҫухне
Ҫӗре тытнӑ улпутсем.
Урӑхла халҫ кӑҫухне—
Ҫӗрхуҫийӗ колхоссем.

Ей, йанра, хуткупӑс, хыттӑн,
Илттӗр савнӑ Пӑраҫук.
Мӗн пур пек ҫӗрсем советӑн,
Патшан халҫ пӗр ҫӗпҫӗм ҫук.

Ҫӗр ҫинҫе тупӑш курас тӑк,
Кирлӗ трактӑр—сӑмахут.
Сӑмахут нумай тумашкӑн
Кирлӗ савӑт ту-ту-тут!

Тырпул ҫукшӑн ес аптратӑн,
Савӑтсем тума тӑрсан.
Тырпула ес йуратан тӑк,
Йуратсам нумай пусса.

Пирӗн йалӗ пит аван-тӑр,
Анҫах, ҫапӗ ҫуккӑрах.
Сухапах халҫ сухалатпӑр,
Ампарӗсем йап-йаках.

Сивӗпе ҫеҫек шӑнаҭ вӗт,
Шӑрӑхпа йӑвӑҫ типет.
Кулака колхос пӑваҭ вӗт,
Суха пуҫ кунта ҫӗрет.

Хулапа йал ҫыхӑнар та
Пуршуйа йӑслантарар.
Кулаксен класне тытар та,
Тымарпех тӑпӑлтарар.

Кулака халҫ, пӗтерер,
Савӑлпах ҫапса хӗсер.
Айтӑр, хӑвӑрттӑн ӗҫлер.
Ҫӗршыва интустрилер!

А. В.

## Хаҫат „вулакан“.

Уҫителсем хушшинҫе хӑшпӗрисем пӗр хаҫат та, шурнал та ҫырӑнса илмеҫҫӗ.

Епӗ пӗрре ҫакӑн пек калаҫува тӗл пултӑм икӗ уҫител хушшинҫе:

**1-мӗш уҫитлӗ:**—Есӗ мӗнле хаҫатсем, шурналсем ҫырӑнса илетӗн?

**2-мӗшӗ:**—«Беднота», «Учительская газета», тата «Безбожник» ҫырӑнса илетӗп.

**1-мӗшӗ**—«За коммунистическое просвещение» ҫырӑнса илетӗни? Ку хаҫат уҫителсене питӗ кирлӗ.

**2-мӗшӗ:**—Ӑна ҫырӑнман, вӑл хаҫат йатне илтмен те. Ун вырӑнне «Учительская газета» ҫырӑнса илетӗп, ку хаҫат та уҫитлӗсемшӗн пит хаклӑ.

**1-мӗшӗ**:—Мӗнле майпа сан пата «Учительская газета» килсе тӑраҭ. Епӗ «Учительская газета» ҫырӑнса йатӑм та, пӗр ик уйӑх килҫе те, кайран улӑшса «За коммунистическое просвещение» килме пуҫларӗ. Халҫ ҫаплах та вӑл килет. «Учительская газетӑна» улӑштарни, «За коммунистическое просвещение» тесе, пӗр ҫул ҫитет. Саншӑн «Учительская газета» тухаҭ пулсан анҫах, пирӗншӗн улӑшнӑ.

Иккӗмӗшӗ ним те калаймарӗ, хӗрелсе ҫеҫ кайрӗ. Мӗн-тӗн тесен суйаҭ, тата ҫитменне хаҫат йатне те пӗлмест.

**П. Ваҫҫилйӗв.**

---

— Ҫапла, ҫапла, „молотсы“, терӗ.

— Епӗ шалтах тӗлӗнтӗм. Суйанӑвпа Кавруҫ Микулайӗ пирӗн колхоса тырӑ тасатмасӑрах актарасшӑн иккӗн йалӗпех, колхосӗпех тырӑ тасатнӑ, тесе ҫветӗни тӑратнӑ,—тесе пӗтерҫӗ ликвитаттӑр.

— Хӑйне тасатас,—кӗрлерӗ халӑх.

Тырӑ валеҫнине тӗрӗс ҫырса пыманшӑн, халӑх хушшинҫе колхоса салатса йарас шутпа елеклесе ҫӳренӗшӗн, колхоса кӗме панӑ сайавленисене 6-шар уйӑх вырттарнӑшӑн, РИК-е суйа ҫветӗнисем тӑратнӑшӑн, колхос правленинҫен кӑларҫӗҫ. Колхосран та сирпӗтрӗҫ. Ӗҫе сут аллине парас, тесе йышӑнҫӗҫ. Суйанӑвпа Микулайа тытса кайсан, колхоса кӗме ҫӗнӗрен 31 килӗ сайавлени паҫӗҫ. Ҫапла тасатрӗҫ Суйанӑвпа Микулайа колхосран.

**Ҫӳпенкке Илли.**

## Отҫот ҫыраҭ.

**Районран килнӗ отҫотсенҫи ҫыхвӑрсем тӗрӗс марисем пулаҫҫӗ.**




**— Мӗншӗнха вӑл сулахай аллине хыҫалалла тытнӑха?**

**— Сылтӑм алли тунине сулахай алли пӗлесрен.**

# Йепле сирес ку йухăма?

Питĕ пысăк шухăш. Ђăнах йепле сирмеллеха ăна халђи вăхăтра, ђухăнсем, вăтам хресђенсем купи-купипе колхоса кĕнĕ вăхăтра. Ёлĕкрех пулсан татах çăмăлтарахђĕ ку колхос йухăмне тĕрлĕ майсемпе ђарса пыма. Халђ ĕнтĕ мĕн çурални çăвар пурри колхоса асăннă ђух нимĕнле майпа та тытса ђарас çук вăл колхос йухăмне. Ăна ђарасси çуркуннехи йухан шыва пӳлсе лартассинђен хĕнĕрех ĕнтĕ халђ.

Йепле уçас кулаксем ваљђи çул? Кулаксен çулне колхос йухăмĕ пӳлсе пырат̆, колхос йухăмĕ кулаксене тĕпĕ тымарĕпех тăпăлтарса пăрахма пулăшат̆. Апла пулсан колхос йухăмне ђармаллах ăна,—тесе шухăшлат̆ пирĕн кулаксен тусĕ Вăрмарти райçĕрпай пуçлăхĕ Çемен Крикорђ.

Анђах колхос йухăмне ђарма пит хĕн. Май тупас пулат̆, майне тупсан тен колхос йухăмне ђарма та пулĕђђĕ. Çав майне тупасси хĕнĕçкеха çав.

Ђылай шухăшласа выртнă хыççăн Çемен Крикорђ:

— Акă тупрăм,—терĕ.—Ним те мар, çав колхоссемшĕн кĕрешекене, вĕсене органисатсилекене сирес пулат̆, вара ĕç тин тухма пултарат̆.

Шухăш аван сан, Çемен Крикорђ, анђах мĕнле пурнăçа кӳртĕнши?

Ăна та шыраса тупат̆ вăл. Камха ман аттепе пĕр тăван пиђђене раскулађђит тунă, камха пирĕн йалта колхоссем органисатсилесшĕн çĕр çывăрмасăр ĕçлет? Ара йалсовет претçетаттĕлĕ. Çавна анђах вĕт сирмелле, вара хăйех ђарнат̆ вăл колхос йухăмĕ,—тесе шутлат̆ вăл.

Ђăнах та суйлав кампани те çитет. Пит аван. Тӳрех хамăр йала кайатăп Рĕкрен уполномођђĕни илсе. Акă вара кăтартатăп епĕ ăна Танил Йаккăлђа,—тет.

Анђах (çак „анђах" сăмах хуплат̆ çав) Тĕпĕçтăвком суйлав кампанине тăсса телекрам йарат̆. Телекрам Вăрмара мартăн 14-мĕш кунĕнђе çитет. Ак тата. Çемен Крикорђ шухăшĕ саланса кайма пултарат̆ вĕт апла.

— Епĕ çуррине туса пĕтернĕ ĕнтĕ, тесе суйат̆ вăл Рĕке.

Апла пулсан пĕтĕмпех пĕтеретĕн пулĕ,— терĕ Рĕкрен. Ак телей!

Çав кунах вара каçпа Çемен Крикорђ Мăнçырмара суйлав туса иттерет. Суйлава çакăн пек хатĕрлет вăл. Кулаксене, карма çăварсене:

— Есĕр пурте пĕр саспа: „пире Танил Йаккăлђă кирлĕ мар, "... тесе кăшкăрăр, тет.

Лешсем вара пухура:

— Кирлĕ мар, кирлĕ мар... мар... мар! тесе çухăраççĕ мĕн пур вăйпа.

Вăт савăнăç! Телей! Тинех Çемен Крикорђăн кăмăлĕ тулђĕ, йăл кулса илђĕ вăл сăмса айĕнђен.

Ак çапла хăтăлђĕ вара Çемен Крикорђă колхос йухăмĕнђен. Çемен Крикорђăн сылтăм сулăнђăк урапи çапла йĕрпе ђупрĕ.

Çĕнĕ состав Танил Йаккăлђă пек колхоссемшĕн тăрăшмаст̆, кулаксем çине те тăрăнмаст̆. Йалĕçтăвком çекреттарĕ Кури Ваççилђ, претçетаттĕлĕ Йермолай Никколайĕв Лешкас Мăнçырмари 67 кектар клевĕре выђăх йарса çитереççĕ те, 6 пусăллă уйран 3 пусса куçаççĕ.

Çĕр ваљеçнĕ ђух кулаксене лайăх çĕр те параççĕ, клас | çулйĕрне пăсаççĕ, вара претçетаттĕлпе çекреттарĕ иккĕш те йалтан тухса тараççĕ.

Çемен Крикорђăн кăмăлĕ тулђĕ. Колхос йухăмĕ пĕтсе ларђĕ, Çемен Крикорђăн раскулађит тунă тăванĕсене Кирил Саххарăва, Йаккăв Антрейĕва теп р хут хăйсен килне кӳртнĕ. Тата мĕн кирлĕ ăна?

Ман шутпа ăна текех нумай кирлĕ мар пек туйăнат̆. Ăна контролђ комиççипе сут анђах кирлĕ курăнат̆.

Контролђ комиçси асту, Çемен Крикорђ такçанах кĕтет вĕт. Пађура Иванĕ.

**ЙУРПА**



**— Пушар трушини ђленĕсем йурпа пемелле выђаççĕ тем?!**

**— Выђамаççĕ вĕсем. Пиђкери шывсем шăнса ларнă пирки, пушара йурпа персе сӳнтерме вĕренеççĕ.**

# Саттирăпа кулăш литтераттурă шурналĕ

# „КАПКĂН"

МАЛАЛЛА кашни номĕртех йалти стсенăсем валђи кулăшла пĕђĕк пйессăсем çапса кăларма тытăнат.

„Йĕплĕ çăмах хыпакансемпе" „Хут купинђен" пайĕсем пысăкланаççĕ.

Тата йалтипе хулари пурнăçăн тŷнтер йенĕсене çутатакан ытти пайсем кашни номĕртех çĕнĕрен те çĕнĕ формăсемпе шăранса тухмалла.

Совет Сойусĕнђи кашни пуштă пунктинђех „КАПКĂНА" çыrăнса илме пулат.

**ХАКНЕ ПĔЛЕТĔР:** кашни уйăха —10-шар пус, çулталăка—1 тенкĕ те 20 пус.

**Ретаксипе кантур атрĕсĕ: Чебоксары, Канашская, 15. Контора (йе ратакси) „Канаш".**

# КАШНИ рапођђи, колхоçнĕк, патрак, ђухăн, вăтам, итле!

Умра хаљ 1931 çул. Есĕ хăвăн хаçата çырăнса илтĕни?

## „ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ" ђентăрта, пилĕк кунта икĕ хут тухакан хăвăр хаçатăр

„**ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ**" парттипе правиттĕлствăн паха йышăнăвĕсене, кăтартăвĕсене, çĕнĕ саккунсене çутатса тăрат.

„**ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ**" колхоссен, совхоссен, машшин стантсисен умри сатађĕсемпе ĕçĕсем çинђен палăртсах тăрат.

„**ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ**" культтурă револђутсин—шкулсен, вулав çурђĕсен ђеретлĕ ĕçĕсем çинђен кăтартса пырат.

„**ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ**" хапрăк-савăтсемпе шахтăсенђи ђăваш рапођђисен ĕçĕсемпе пурнăçĕ çинђен сырат.

„**ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ**" йут патшалăхсенђи тата Совет Сойусĕнђи паха ĕçĕсем çинђен пĕлтерет.

„**ЂĂВАШ ХРЕСЂЕНĔ**" сăвă-калавсене, ĕçйалкорсен çыравĕсене, фотто-ŷкерђĕксене кŷртсе пырат.

**ЂĂВАШЛА ПЫСĂК КĂЛЕНТАРА** 1931-мĕш çулăн йанвар уйăхĕнђен пуçласа хаçата çулталăка çырăнса илекенсене паратпăр.

**ХРЕСЂЕН ВЫРĂСЛА КĂЛЕНТАРА** „Ђăваш Хресђен" хаçата 1930-мĕш çулшăн çулталăка çырăннисене, вĕсем 1930-ш çулта „Ђăвашла кăлентар" илмесĕр йулнисем патне йаратпăр.

ХАÇАТĂН ХАКĔ: 1 çула—1 тенкĕ те 60 пус, çур çула—80 пус, 3 уйăха—40 пус, пĕр уйăха—15 пус.

**Пурне те, Пурне те, Пурне те!!!**

# „КОЛХОÇНĔК" хаçат калаçат

**Пурнăç хăвăртлăхĕнђен ан йулăр!**

ÇĔНĔ ÇУЛТАН пуçласа „КОЛХОÇНĔК" уйăхра 8 номĕр тухма тытăнђĕ.

ХАÇАТ ХАКĔ: çĕнĕ çултан пуçласа кашни уйăха—20 пус, çулталăка 1 тенкĕ те 20 п.

**Кашни ђăваш килĕнђех „Колхоçнĕк" хаçат пултăр!**



Ответлă ретактăр: **А. В. Ваççилйĕв**

Чувашлит № 1045. Город Чебоксары. Тип. № 1 Чувашгосиздата Заказ № 13. Напеч. 6600.

# Капла аван хут вӗренме ҫӳресен



— Анне, паян ӗнтӗ хам черете иртерсе килтӗм, сан черет ҫитрӗ. Чейне санмӑн хам ӗҫсе пӗтерем.